## Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ



**ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидат**

**Владимир Петрович ФИРСОВ**

**Сире суйлава кайма кирлех те мар тесе хăнăхтарнă. Кун пек влаçăн халăх пурлăхĕпе хăйсем пĕлнĕ пек усă курма майсем ытларахçке. Сире çĕршывра пурнăç шайне лайăхлатма укçа-тенкĕ çитмест тесе ăнлантарма хăтланнă. Сирĕн чухăнлăх хăвăртанах килет тесе ĕнентерме пăхнă сире.**

**Ан ĕненĕр! Çынсен пурнăçне халех палăрмаллах лайăхлатма Раççейĕн пур майсем те пур! Çакна тума вара чиновниксемпе олигархсем хăйсен аллине çавăрса илнĕ влаçпа харпăрлăха халăха таврăрса памалла! Раççей пуянлăхĕсемпе эпир хамăр пĕлсе усă курма тивĕç. Ку вăл – Конституципе çирĕплетнĕ пирĕн право!**

**Материал тӳлевсĕр пичетленет.**

## Паянхи çивĕч ыйтусемпе

# Ертӳçĕ яваплăха туймасан... Е йăлтах хамăртан килет

***Районăн 8 уйăхри социаллă-экономика аталанăвĕ. Вырма ĕçĕсем. Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕллехи тапхăра хатĕрлесси. Çак тата ытти пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тавра калаçрĕç те ĕнтĕ ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе кĕçнерни кун иртнĕ канашлура. Унта çавăн пекех район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем пулчĕç. Семинар-канашлу ĕçне республикăри ветслужба ертӳçи В.К. Тихонов та хутшăнчĕ.***

Семинар-канашлăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ, вăлах ертсе пычĕ. Чи малтанах Юрий Александрович ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров нумаях пулмасть ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, предприятисен ертӳçисемпе Канаш хулинче ирттернĕ канашлу çинче чарăнчĕ. Тĕпрен илсен, сăмах унта вырма ĕçĕсем, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕле хатĕрлесси, “АПК аталантарасси” наци проекчĕ, çулсем тăвас ыйту тавра пулнă. Район пуçлăхĕ çак ыйтусемпе район шайĕнче те çине тăрса ĕçлемеллине палăртрĕ. Мĕншĕн тесессĕн паян вырма хăвăртлăхĕ те никама та тивĕçтермест. Çав хушăрах выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе те туса çитермен ĕçсем çук мар. Е тата килти хушма хуçалăха аталантарма патшалăх пулăшăвне илнисем унпа тĕллевлĕн усă курнине çирĕплетмен тĕслĕхсем республикăра тĕл пулни те пире ку тĕлĕшпе алă усма памасть. Кун пекки районта ан пултăр тесен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен кредит илнĕ гражданасене 45 кун хушшинче унпа тĕллевлĕн усă курнине çирĕплетекен документсене хатĕрлеме пулăшмалла. Çакăн пирки асилтерсех тăмалла.

– Халăха çак пулăшупа усă курни вырăнлине ăнлантартăмăр пулсан, ун çăмăллăхне туйса илме пулăшмалла пирĕн, - терĕ Юрий Александрович.

Кунта палăртса хăвармалла. Çак ĕçе кредит илнĕ кунран пуçласа 45 кун хушшинче туса çитермесен, çăмăллатнă кредит хăйне хăех 19 процентлă коммерци кредитне куçса каять. Халĕ шăпах патшалăх процентсене саплаштарма кредит счечĕ çине укçа куçармалли тапхăр çитрĕ.

Юрий Александрович çавăн пекех уйрăм хушма хуçалăх тытакансем, пĕр-пĕринпе калаçса татăлса, хресчен (фермер) хуçалăхне йĕркелени вырăнлă пулнине палăртрĕ. Çакă асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн паракан патшалăх пулăшăвне 3 миллион тенкĕ таранах илме май парать.

Халех татса памалли çивĕч ыйтусенчен пĕри вăл – районти 36 ял патне асфальтлă çулсем сарасси. Вĕсенчен 16шĕн çеç проектпа смета документчĕсем пур. ЧР Президенчĕ лартнă задачăна пурнăçлассипе паянах тимлемелле. Çавăнпа та 20 ял патне çул сармалли проектсем хатĕр пулассине кĕтмесĕр, шăнтма пуçличен май килнĕ таран ытларах çĕрте çула хăпартса хăвармалла. Ялсенче тирпей-илем кĕртмелле.

Вырма ыйтăвĕсемпе те анлă калаçу пулчĕ. Сăлтавĕ те çук мар. Паян тĕш-тырăпа пăрça йышши культурăсене пĕтĕм лаптăкăн 90 процентне яхăн лаптăк çинчен çеç пуçтарса кĕртнĕ. Айăпĕ çумăрлă çанталăкра кăна пулнă пулсан, паян пĕр хуçалăх та ку ĕçе вĕçлеймен пулĕччĕ. Тĕп сăлтавĕ кунта: хуçалăх ертӳçисем вырăнсенче ĕçе пĕлсе йĕркеленипе е йĕркелеменнипе çыхăннă. Тыр-пула пухса кĕртсе пĕтернĕ “Восток”, “Герой”, “Агроурожай”, Ильич яч.хис., Суворов яч. хис, “Оринино” хуçалăхсенче, Нива” чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа Матвеев хресчен (фермер) хуçалăхĕнче типĕ çут çанталăк пулнă тесшĕн-и ку ĕçе вăраха янă хуçалăхсем? Мĕншĕн пĕр пек çанталăк условийĕсенчех “Волгăра”, “Свободăра” “Рассветпа” “Ударникра”, “Чемеевăра”, Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхра вырма вĕçленсе пырать, çав хушăра “Лидер”, Е. Андреев яч. хис., Ленин яч. хис, “Передовик” хуçалăхсемпе “Нива” АФ, Михайлов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вăраха тăсăлаççĕ уйри ĕçсем? Кая юлнă хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсем яваплăха туйманнипе.

Тыр-пул тухăçне илер-ха . Районĕпе вăл – 17 центнер. Вăл епле пуласси вырма вăхăтĕнче ĕçе пĕлсе йĕркеленинчен çеç пуçланмасть вĕт. Тырра акма çĕре епле хатĕрленинченех тытăнать. Çав тапхăрта агротехника мероприятийĕсене пăхăнса ирттернинчен. “Ударникра” тыр-пул тухăçĕ 25, Ильич яч. хис. хуçалăхра 22, “Востокпа” “Геройра” 21, “Свободăпа” Чапаев яч.хис. хуçалăхра 20 центнерпа танлашни мĕн çинчен калать? Асăннă хуçалăхсенче çĕр ĕç культурине кирлĕ пек тытса пыни çинчен. Çав хушăрах “Колос”, К. Иванов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., “Передовик”, “Лидер”, “Хлебороб” хуçалăхсемпе Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, “Нива” АФ тухăç районти вăтам кăтартуран палăрмаллах пĕчĕк. Кĕр тыррисене акнине илсессĕн те çав уйрăмлăхах. Районĕпе вĕсене палăртнă лаптăкăн 62 проценчĕ çинче акнă пулсан, Чкалов яч. хис. хуçалăра палăртнинчен 48, “Востокра” 29, “Ударникра” 13, Чапаев яч. хис. хуçалăхра 10 процент ытларах акса хăварнă. Кĕр тыррисене акмалли ăнăçлă тапхăртах умри тĕллевсене пурнăçласа ĕлкĕрнĕ.

Семинар-канашлура район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов вырма вĕçленнĕ хуçалăхсенчи пушаннă техникăпа ăна ĕлкĕреймен хуçалăхсенче усă курмаллине палăртрĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вырма ĕçĕсене критикăлла хак панă май çакна палăртрĕ:

– Паян уяр кунăн кашни саманчĕпе туллин усă курмалла: тыр-пула пухса кĕртнĕ, çĕрулми кăларнă çĕрте тимлемелле, – терĕ вăл.

Канашлура хускатнă тепĕр ыйту çине сăмаха куçарнă май, çакна палăртмалла, “АПК аталантарасси” наци проекчĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕне ура çине тăратма та пысăк пулăшу парать. Çĕнĕ технологипе ĕçлемелли фермăсем тума 8 çуллăха кредит илме пулать. 8 хуçалăх ку тĕлĕшпе документсем хатĕрленĕ ĕнтĕ.

6-шĕ сĕт-çу фермисене реконструкцилеме, “Ударник” сĕт-çу комплексне йĕркелесшĕн, тепĕр хуçалăх сысна тата ĕне выльăх ашне туса илессинче çĕнĕ технологипе ĕçлеме паянхи кун ыйтакан оборудовани туянасшăн.

Ир тăракан кайăк тутă пулнă тени, вырмара çеç мар, кунта та куçкĕретех. Çитес çул валли программăна кĕме васкаман хуçалăхсен ĕмĕттĕллевĕсем епле-ши?

Фермăсене хĕле хатĕрлес ĕçе тишкерни вара хăш-пĕр хуçалăхсем паянхи кунпа çеç пурăннине çирĕплетсе парать. Тĕслĕхрен, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра.

– Юсав ĕçĕсем пуçланман. Витесенче доярккăсем мар, ĕнесем аран çӳреççĕ тислĕк кăларманнипе. Тата ăçта çити антарса лартасшăнши хуçалăха, – тарăхнине те, чун ыратнине те пытараймарĕ канашлура районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп зоотехникĕ Т.П. Волкова. – Сунă сĕте ытларах кăтартса çырнипе тата хуçалăх пуянланать-ши?

Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи юлашки ĕнесем мĕн çисе хĕл каçĕç? Кăвакарса-хуралса ларнă утăпах сĕт суса илесшĕн-ши кунта? Чапаев яч.хис., “Чемеево” хуçалăхсен фермисем навус ăшне путма пуçланине ертӳçисем курмаççĕ-и? Тислĕк тăрăх сĕт бидонĕ сĕтĕрекен дояркăсем вырăнне хăйсене лартса пăхмаççĕ пуль çав шухăшпа. Ун пек тунă пулсан, ку тĕлĕшпе лару-тăрăва çав тери йĕркерен кăларса ямасчĕçех пуль. “Передовик” хуçалăхра та фермăсене хĕле хатĕрлес енĕпе тар кăларсах тимлемелле-ха. “Чемеево”, “Сеятель” хуçалăхсем те çителĕклĕ ĕçлеççĕ теме çук.

Район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕсем çитменлĕхсемлĕ хуçалăха шухăша ямалла пек.

– Çумăрлă çанталăкра уйра ĕç кайман чух фермăри лару-тăрăва йĕркелемелле пек.

Унта та, кунта та туса çитереймен ĕçсем каллех ертӳçĕсем хăйсен тивĕçĕсене яваплăрах пурнăçламаллине пĕлтерет.

Яваплăх тенĕрен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен те ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тусан пăсмасть. Çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарасси паян тивĕçлĕ шайра мар **(кун пирки тĕплĕнрех – çитес номерте).** Канашлура район аталанăвĕн 8 уйăхри пĕтĕмлетĕвне тишкерчĕç **(тĕплĕнрех – çитес номерте)**, епле пуласси пирĕнтен кашнинченех килет. Çавăнпа та пирĕн пурин те хамăрăн ĕç вырăнĕсенче тăрăшса вăй хумалла. Вара 2007 çулта ял тăрăхĕсен бюджетне йышăнассипе те ытлашши ыйтусем сиксе тухмĕç. Ларура пăхса тухнă тепĕр ыйтури пек Ярославка, Ильинка, Ярапайкасси, Турай, Муркаш, Шетмĕпуç, Хорнуй ял тăрăхĕсенче те тĕслĕхлĕ библиотекăсем уçăлĕç. Пур çĕрте те йĕрке пулĕ. Йăлтах хамăртан килет.

## Уйăхлăх ыйтăвĕсемпе

# Вĕçĕмех тимлĕх уйăрасчĕ

***Хальхи вăхăтра çынсем гражданла оборона енĕпе тата чрезвычайлă лару-тăруран сыхланассипе хатĕр пулни, ку енĕпе кирлĕ пĕлӳ илме пултарни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Раççей Федерацийĕн Правительстви те ку тĕлĕшпе ятарлă положенисем кăларнă, постановленисем çирĕплетнĕ. Ку енĕпех Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ те пур. Çавна май çуллен гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру правилисене халăх хушшинче анлăрах сарас, хăйсен тата ыттисен хăрушсăрлăхăшĕн кашнин ответлăхне ӳстерес, çитĕнекен ăру тĕрлĕрен инкек-синкекре пĕр-пĕрне пулăшу памалли мелсене алла илсе ӳстĕр тесе уйăхлăхсем ирттересси йăлана кĕнĕ.***

***Çак кунсенче район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕпе Николай Панфилович МИЛЮТИНПА тĕл пулнă, кăçалхи уйăхлăх, унăн тĕллевĕсемпе задачисем, мĕнле ĕçсем туса ирттерме пăхни пирки кĕскен калаçса пама ыйтнă.***

– Кăçал та гражданла хӳтĕлев уйăхлăхĕ иртет. Район территорийĕнче вăл сентябрĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 4-мĕшĕччен пырать. Ку енĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕ ятарлă йышăну турĕ. Çак тапхăрта туса ирттеремелли ĕçсен планне çирĕплетнĕ. Вырăнсенче, организацисемпе учрежденисенче, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паркан шкулсенче, ача сачĕсенче мĕнле ĕçсем туса ирттересси тĕп вырăнта пулмалла-ха?

Гражданла оборона мероприятийĕсене, чрезвычайлă лару-тăруран тата пушартан хӳтĕленессипе смотр-конкурс йĕркеленĕ. Вĕренӳ заведенийĕсенче вара вĕренекенсем хушшинче «Эпир хăрушлăхсăр тĕнчешĕн» темăпа ачасен ӳкерчĕкĕсен конкурсĕ иртет. Кунпа пĕрлех шкулсенче гражданла оборона, чрезвычайлă лару-тăруран тата пушартан хӳтĕленес ыйтусемпе конкурссемпе викторинăсем те иртĕç.

Районти шалти ĕçсен пайĕн, район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн ответлă ĕçченĕсем шкулсенче пулаççĕ. Вĕренекенсем хушшинче чрезвычайлă лару-тăруран хӳтĕленессипе, пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе, çулсем çинче хăйсене кашнин мĕнле тытмалли пирки калаçусем ирттереме палăртатпăр. Çакă ăнсăртран мар. Мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра ача-пăча айăпĕпе районта пушарсем тухнă тĕслĕхсем сахал мар. Çулсем çинче те ачасем автомашина айне пулнă тĕслĕхсем тăтăшах тĕл пулаççĕ.

Тĕрлĕ инкек-синкекрен хӳтĕленес ыйтусене шкулсенче пропагандăласси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсех «ОБЖ» курсĕн кăтартуллă усă урокĕсене те ирттерме палăртнă. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче вара усă алăксен кунне ирттеретпĕр.

Паллă ĕнтĕ, аварисемпе катастрофăсене пула кӳнĕ инкексене пĕтерме хутшăннисемпе, гражданла оборона ĕçĕн ветеранĕсемпе тĕл пулусем ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем çак пулăмсене хăйсен куçĕпе курнă, çавăнпа та вĕсен аса илĕвĕсем те ыттисемшĕн витĕмлĕрех.

Сăмах сăмахпа та, çав вăхăтрах практикăлла ĕçсем, хатĕрленӳ пирки те манма юрамасть. Çавна май гражданла оборона, чрезвычайлă лару-тăрупа пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе мероприятисене пурнăçлассипе ученисемпе тренировкăсем те иртмелле. Практикăлла хăнăху яланах кирлĕ.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Асăннă ĕç пĕр уйăхлăх анчах пулмалла мар. Ăна вĕçĕмех куç ытамĕнчен кăларас марччĕ. Çакă пĕтĕмпех пирĕншĕн хамăршăнах.

## Ĕçре пултаруллисем

# Ачасемшĕн чунне парать




***Учитель ĕçĕ çăмăл пулманни пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Хăвăн пĕлӳ шайĕ те пысăк пулмалла, ăна ӳстерсех пымалла, хăвна тытма та пĕлмелле, чи кирли вара – чăтăмлăх. Шкула пуçласа килме тытăнакансемпе вара ку пушшех те çапла.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Валентина Владимировна Смирнова Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта кĕçĕн классен учительници пулса тăрăшать. 32 çул вăл çак ĕçре. Педагогика училищине, педагогика университетне вĕренсе пĕтерне, халĕ те пĕлĕвне ӳстерме кирлине манмасть. Ахальтен мар ĕнтĕ хастар педагог Чăваш Республикин Президенчĕн грантне – 10 пин тенкĕне тивĕçнĕ.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Шухăш

# Аннерен хакли çук

Анне... Тĕнчере чи хитри, чи кăмăллi, чи ырри, чи ăсли – эсĕ. Амăшĕ кашни ачашăн хаклăран та хаклă. Анне çуратнă, ӳстернĕ, тумлантарнă, çитĕнтернĕ, ăс-тăн парнеленĕ, вĕрентнĕ, кирлĕ чухне вăрçнă та, чи пахи вара – вăл пире юратнă. Аннесемшĕн эпир яланах пĕчĕк ачасем. Çавăнпа та йывăр самантсенче, савăнăçлă кунсенче эпир анне патне васкатпăр.

Амăшĕ хăйĕн ачине нихăçан та усал сунмĕ. Вăл яланах тĕрĕс, ăслă шухăшсем парса пулăшĕ – нушаланма памĕ.

Анчах тем тĕрлĕ анне те, тем тĕрлĕ ача та пур иккен. Хамăр яла илес пулсассăн, амăшĕпе ачисем мĕн хăтланмаççĕ пуль: ташлама та пĕрле çӳреççĕ, эрехне те пĕр саватранах ĕçеççĕ, пирусне те туртаççĕ, пĕтĕм халăх умĕнче пĕр-пĕрне усал сăмахпа та вăрçаççĕ. Ку питĕ илемсĕр, килĕшӳсĕр вара. Çакă пĕтĕмпех хамăртан килет: усаллине вĕренме хăвăртах пулĕ, тĕрĕс пурнăç çулĕ çине тăма питĕ йывăр.

**Инна ЯШКОВА.**

## “Кĕр парнисем”

# Шупашкарта сутма пулать

Кĕркунне çитрĕ. Пахча çимĕç хамăра валли çеç мар, сутмалăх та çитет. Çитĕнтернĕ продукцие ăçта вырнаçтармалла? Район администрацийĕ сире ку тĕлĕшпе, акă, мĕн пĕлтерет. Сентябрĕн 9-мĕшĕнче республикăра “Кĕр парнисем” ятпа уйăхлăх пуçланчĕ. Ăна республикăри ял хуçалăх продукчĕсене туса кăларакансене çитĕнтернĕ продукцие вырнаçтарма, Шупашкарпа Çĕн Шупашкарта пурăнакансене кăçалхи пахалăхлă ял хуçалăх продукчĕсемпе тивĕçтерес тĕллевпе ирттереççĕ. Асăннă уйăхлăх октябрĕн 9-мĕшĕччен пырать.

Халĕ тимлĕ пулăр. Пирĕн районта пурăнакансем, предпринимательсем, килти хушма хуçалăх тытакансем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çак уйăхлăх вăхăтĕнче Шупашкарта çак вырăнсенче ял хуçалăх продукчĕсене сутма пултараççĕ: Ленин районĕнче (Юрий Валентинович Петров, 20-05-63), курттăмăн продукци сутмалли “Колос” пасар (Николаев урамĕ, 14 а çурт), Чăваш потребсоюз çурчĕ умĕнчи лаптăк (Мускав проспекчĕ, 34 çурт), Водопроводная урамра 18-мĕш тата 20-мĕш номерлĕ çуртсем хушшинче, М. Павлов урамĕнче 34-мĕш номерлĕ çурт умĕнче, С. Михайлов урамĕнчи 1-мĕш номерлĕ çурт умĕнче, “Грязелечебница” чарăну районĕнче - М. Павлов урамĕн мăшăрлă номерлĕ çуртсем енче, Афанасьев урамĕнчи суту-илӳ валли уйăрнă вырăнта, “Северная ярмарка” территоринче.

Апла пулсассăн, çак условисемпе усă курса, ытлашши ял хуçалăх продукчĕсене вырнаçтарма тăрăшăр.